ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ÇУЛ-ЙЕР ФОНЧЕ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 2 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Çул-йĕр фончĕ çинчен" 2011 çулхи чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 71 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 6 №; 2016, 10 №; "Республика" хаçат, 2018, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ) 2 статйине çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) виççĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"транспорт налукĕнчен (транспорт налукĕнчен вырăнти бюджетсене пĕрлехи нормативсем евĕр уйăрса панинчен илекен Чăваш Республикин саккунĕпе палăртнă тупăшсемсĕр пуçне);";

2) саккăрмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикинче регион е муниципалитетсем хушшинчи пĕлтерĕшлĕ автомобиль çулĕсене йывăр виçеллĕ транспорт хатĕрĕсем сиен кӳнине саплаштарма тӳлекен укçа-тенкĕрен;";

3) вуннăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"йывăр виçеллĕ тата (е) пысăк калăпăшлă транспорт хатĕрĕсем çулçӳрев правилисене пăснăшăн илекен штрафсенчен;";

4) çакăн пек çырса вун çиччĕмĕш тата вун саккăрмĕш çĕнĕ абзацсем хушса хурас:

"муниципаллă пĕрлĕхсен бюджечĕсене Чăваш Республикинче вырăн пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан автомобиль çулĕсем тĕлĕшпе пурнăçлакан çул-йĕр ĕç-хĕлне укçа-тенкĕпе тивĕçтерме, çавăн пекех халăх пурăнакан вырăнсенчи нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсен территорийĕсене, нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсен территорийĕсем патне пымалли çулсене тĕпрен юсама тата юсама Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен бюджетсем хушшинчи трансфертсем уйăрса парасси çинчен калакан килĕшӳсемпе палăртнă обязательствăсене пăснă чухне тавăрса паракан укçа-тенкĕрен.

Çул-йĕр фончĕн бюджет укçи-тенкине йĕркелекен çăл куçсен шутне Чăваш Республикин Чăваш Республикин черетлĕ финанс çулĕнчи тата планпа пăхнă тапхăрти республика бюджечĕ çинчен калакан саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин республика бюджетне пырса кĕнĕ ытти укçа-тенкĕ кĕрет.";

5) вун çиччĕмĕш – вун тăххăрмĕш абзацсене тивĕçлĕн вун тăххăрмĕш – çирĕм пĕрремĕш абзацсем тесе шутлас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ
6 №